# Паян «Чăваш хĕрарăмĕ» хаçатăн çĕнĕ номерĕ пичетленсе тухрĕ

*• Н.А.Андреев /Урхи/: 120 çул*

# Вăрăм ĕмĕрлĕ чĕлхеçĕ

Шупашкарта И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕ уçăлнă май /1968 çулта/ И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институчĕн историпе филологи факультетне унта куçарчĕç. Çав çул эпĕ чăваш чĕлхипе литература уйрăмне куçăн мар майпа вĕренме кĕтĕм. Пĕрремĕш курсра студентсен йышĕ 25 çынран ытлашши марччĕ. Вĕрентекенсем те нумайăн пулман. А.С.Уськин /ун чухне доцент/ факультет деканĕччĕ. Кафедра пуçлăхне М.Я.Сироткин профессора лартрĕç. В.Г.Егоров, С.П.Горский профессорсем те ĕçлеме пăрахманччĕ-ха. Кафедра пÿлĕмĕнче В.Я.Канюков, С.П.Юшков, И.И.Одюков ăсчахсене тĕл пулма май пурччĕ.

Эпĕ экзаменра çырнă сочинение мухтаса С.П.Юшков «Ульяновец» хаçатра статья кăларчĕ. Хамăр уйрăмри студентсем мана староста пулма суйларĕç.

Филологи наукисен кандидачĕ И.И.Одюков куçăн мар майпа вĕренекенсемпе ĕçлетчĕ. Пĕррехинче вăл мана хăйĕн патне чĕнсе кĕртрĕ. Çуллахи шăрăх кун, аудиторисенче те пăчă. Иван Ильич хăйĕн сăмахне вĕçлесе пĕтерейменĕ, алăкран шаккарĕç, çитмĕлтен иртнĕ старик кĕрсе тăчĕ. И.И.Одюков ăна ура çине тăрса кĕтсе илчĕ, ларма сĕнчĕ, мана кăшт çеç тăхтама ыйтса унпа пуплеме пуçларĕ. Вĕсен калаçăвĕнчен эпĕ çакна ăнлантăм: ватă çын кăçал университетран вĕренсе тухнă-мĕн, паян диплом илнĕ. Çавна май пулăшса пынăшăн Одюкова тав тăвать, малашне пĕрле ĕçлесси пирки калаçать. Хăна пÿлĕмре нумай лармарĕ, сыв пуллашса тухса кайрĕ. Эпĕ ку çын кам пулни çинчен Иван Ильичран ыйтса пĕлтĕм.

– Наум Андреев чĕлхеçĕ, кăçал, çитмĕл çичĕ çул тултарас умĕн, куçăн мар майпа университет пĕтерчĕ, – терĕ вĕрентÿçĕ.

1975 çулта эпĕ пĕр вăхăтрах Чăваш патшалăх университетĕнчен те, Чулхулари партин аслă шкулĕнчен те вĕренсе тухрăм. Мана Комсомольски районĕнчи «Октябрь ялавĕ» хаçат редакторне çирĕплетрĕç. Вăхăт кĕр енне сулăннăччĕ ĕнтĕ, Шупашкара килсе каймалла пулчĕ. Ун чухне Чăваш кĕнеке издательствин директорĕнче пĕлĕшĕм, хамăр ентеш Д.В.Гордеев писатель ĕçлетчĕ. Унпа тĕл пулас тесе Ленин проспектĕнчи тăваттăмĕш çурта кĕтĕм. Çын нумай, директора парти обкомне чĕнтернĕ-мĕн, вăл килессе кĕтеççĕ. Пухăннисен темĕн пирки чăвашлах тавлашаççĕ. Вĕсен хушшинче ватă пĕр çын пур. Эпĕ ăна тасcа курнă пек, анчах ниепле те аса илейместĕп. Вăл, çак самантченех тавлашăва хутшăнманскер, вырăсла: «Вольному воля, спасенному – рай», – терĕ, калаçакансем çăварĕсене шыв сыпрĕç тейĕн, сасартăк чарăнчĕç. Эпĕ ку кăптăрмăш старикĕн ятне-шывне аса илтĕм: ара, Наум Андреев чĕлхеçĕ-çке!

Наум Андреевичăн биографийĕ тĕрлĕ пулăмпа пуян. Вăл Элĕк районĕнчи Ехремкасси ялĕнче 1891 çулхи раштавăн 4-мĕшĕнче çуралнă. Çав çулсенче ку тăрăхра Элĕкри икĕ класлă шкул ырă ят илнĕ. Ăна пĕтерсе тухнă вун-вун ача Чĕмпĕрти чăваш шкулне вĕренме кĕнĕ. Наум Андреев çак хулари арçынсен пĕрремĕш гимназийĕнче экстерн йĕркипе экзамен тытса учитель профессине алла илнĕ. Пĕрремĕш тĕнче вăрçин çулĕсенче çарта пулнă.

1918 çулта Урхи Наумĕ Хусан кĕпĕрне канашĕ çумĕнчи чăваш пайĕнче ĕçлеме пуçланă, кунта ăна тăлмач пулма лартнă. Ĕçленĕ вăхăтра вăл ял хуçалăх техникумĕнче вĕреннĕ. 1920 çулта Шупашкара куçса килнĕ те «Шурăмпуç» журнала редакциленĕ. Куçарăвăн тĕп комиссийĕнче ĕçлеме те ăна хушнă. Кунта Урхи Наумĕ Çеçпĕл Мишшипе паллашнă. Пĕр вăхăт вĕсем пĕр пÿлĕмре, пĕр сĕтел хушшинче ларса ĕçленĕ. Çакăн пирки кайран Н.А.Андреев тĕплĕн аса илсе çырнă. Автономи облаçĕ туса хунă хыççăн хаçатсемпе журналсен редакцийĕсем Шупашкара куçса килнĕ, пысăк типографи йĕркеленнĕ. Çав çулсенче Урхи «Канаш» хаçат редакцийĕнче, «Чăваш ялĕ» журнал секретариатĕнче, кĕнеке издательствинче ĕçленĕ.

Йывăр çулсем хыçа юлнă, республика аталанса пынă, культура, литература, искусство вăй илнĕ. Н.А.Андреев /Урхи/ юратнă ĕçрен пăрăнман, 1940-1943 çулсенче – Чăваш АССР Аслă Канаш Президиумĕн куçаруçи, 1944–1956 çулсенче – ЧАССР Министрсен Канашĕ çумĕнчи Чĕлхе, литература тата историпе наука тĕпчев институчĕн /халĕ Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ/ чĕлхе секторĕн ăслăлăх ĕçченĕ, словарьсем хатĕрлес ĕçе хутшăннă, чăваш чĕлхин лексикипе стилистикине тĕпченĕ. 1958-1966 çулсенче чăваш чĕлхин стилистикине тĕпчесе очерксен виçĕ кĕнекине кăларнă.

Урхи Наумĕн тĕпчевĕсем паянхи кун та кивелмен. Вĕсемпе наука çыннисем кандидат тата доктор диссертацийĕсене çырнă чухне усă кураççĕ. Н.А.Андреев чăваш чĕлхин лексикологине те тарăннăн тĕпченĕ, 1961 çулта Шупашкарта «Чăваш чĕлхин лексикологийĕ» кĕнеке пичетлесе кăларнă.

Н.А.Андреев /Урхи/ нумай чĕлхе пĕлнĕ, илемлĕ литературăпа кăсăкланнă. Вăл нимĕçле, акăлчанла шăкăртаттарса калаçнă. В.Гётен «Фауст» трагедине нимĕçлерен тÿрех чăвашла куçарни те çакна çирĕплетет.

Урхи Наумĕ иран /перс/ чĕлхине те лайăх пĕлнĕ. Чăваш чĕлхи тĕрĕк чĕлхисен йышне кĕрет, анчах чăвашпа иран чĕлхисенче пĕр пеклĕхсем çук мар. Н.А.Андреева çакă та кăсăклантарнă. Ку темăпа вăл тĕрлĕ çулта ăслăлăх ĕçĕсем çырса пичетленĕ.

Урхи Наумĕ çуралнăранпа 120 çул çитрĕ. Вăл вăрăм ĕмĕр пурăнса иртрернĕ, 93 çула кайса 1984 çулхи авăн уйăхĕн 1-мĕшĕнче пирĕнтен яланлăхах уйрăлса кайнă.

■ **Геннадий УТКИН**